Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

8 (8172) № ✻ *Шăмат кун, 2014 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 5-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

Статистика

## Ял хуçалăхĕнчи çырав

Росстат 2014 – 2018 çулсенчи ĕç планĕн календарьне çирĕплетнĕ. Унта 2016 çулта Раççейре ял хуçалăх çыравне ирттерме хатĕрленесси тата ирттересси тĕп вырăнта. Çак йышăнăва Раççей Федерацийĕн Правительствин 2013 çулхи ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчи «2016 çулта Раççейри ял хуçалăх çыравне ирттерессине йĕркелесси çинчен» йышăнăвне пурнăçласа кун çути панă.

Асăннă йышăнупах РФ Правительстви Раççей субъекчĕсен патшалăх влаç органĕсене тата вырăнти самоуправлени органĕсене çырав ирттерме комиссисем йĕркелеме сĕннĕ. Вĕсен статистика органĕсене тата çак ĕçе явăçтарнă граждансене вырăнсенчи çырава туллин ирттерме пулăшмалла.

Ял хуçалăх çыравĕ 2016 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен пырать. Инçетерех вырнаçнă тата çитме кансĕр вырăнсенче çырав авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕччен иртĕ. Çырава пĕтĕмлетмелли тата ăна официаллă пĕлтермелли вăхăт – 2018 çулхи 4-мĕш квартал.

Кунашкал çырав çĕр-шывра юлашки хут 2006 çулта иртнĕ. Вăл ял хуçалăхĕнчи пĕтĕмĕшле ӳкерчĕке курма тата тивĕçлĕ йышăнусем тума пулăшнă.

**Чăвашстатăн пресс-служби.**

Çĕнĕлĕхсем

## Геопорталти хушма карттăсем

Чăваш Республикин геоинформаци порталĕнче татах икĕ сий хутшăнать: «2013 çулта космосран ӳкерни» тата «Ял хуçалăхĕн тематика картти».

Космосран тунă ӳкерчĕксем топографи тата ятарлă карттăсен никĕсĕ пулĕç. Вĕсемпе ял хуçалăхĕнчен тытăнса патшалăх управленийĕ таранах тĕрлĕ çĕрте усă курĕç. Тĕслĕхрен, космосран тунă ӳкерчĕксемпе вăрманти лару-тăрăвăн тата акнă-лартнă культурăсен аталанăвĕн мониторингне тытса пыма май пулĕ. Тухăç епле пулассине прогнозласси, стихиллĕ лару-тăрăва хакласси, çын çут çанталăк çине мĕнле витĕм кӳнине тата биресурссен улшăнăвне сăнасси т. ыт. те çĕнĕ шая тухĕç.

Геопорталăн тĕп страницинче ĕçлеме пуçлама «Запустить «MAP VIEWER» кнопкăна пусмалла. Уçăлнă чӳречере кирлĕ сийсене (V паллăпа) тата конкретлă сийсене (+ паллăпа) суйламалла.

**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.**

Вулакансене пĕлме

## Шăмат кунхи номерте – парне




**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене редакци парнепе хавхалантарма шутларĕ. Парни – стена çине çакмалли 2014 çулхи тĕслĕ календарь (сăн ӳкерчĕкре).**

**Парне пама сăлтавĕ те пур. Кăçал Муркаш районĕ 70 çул тултарать. Çавăн пекех «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат тухма пуçланăранпа та 70 çул çитет.**

**Парнене вулакансем райхаçатăн шăмат кунхи номерĕпе пĕрле илĕç. Почтальонсенчен ыйтма ан манăр. «Чăваш пичечĕн» киоскĕ урлă çырăннисем киоскра аса илтерĕр.**

Иртнĕ çул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май

## Аталану ăнăçлăхĕ хамăртанах килет



Çулталăк иртсе кайнă май çак кунсенче кашни ĕç коллективĕнче кăна мар, кашни районтах 2013 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсене тишкерсе хак параççĕ, малашлăх тĕллевĕсене уçăмлатаççĕ, çĕнĕ çулталăкри задачăсене палăртаççĕ.

Иртнĕ тунти кун кун пек анлă канашлу пирĕн районта иртрĕ. Район активĕн анлă канашлăвĕн ĕçне депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем, район администрацийĕн, районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен, тĕрлĕ харпăрлăх формипе ĕçлекен хуçалăхсен ертӳçисемпе ответлă ĕçченĕсем, федераци структурисен районти представителĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тата ыттисем хутшăнчĕç. Пĕрлехи канашлăва çавăн пекех Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Ю. Попов, республикăри гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ В. Петров, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Н. Ванеркин тата В. Мидуков хутшăнчĕç.

**(Анлă канашлу мĕнле иртнĕ пирки тĕплĕнрех 2-мĕш стр. вуласа пĕлĕр).**

**Сăн ӳкерчĕкре: Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Турхан ялĕнче пурăнакан Надеждăпа Константин Филипповсен çемйи харăсах икĕ сертификата – ача амăшĕн капиталĕн Раççей шайĕнчи тата республикăри сертификачĕсене тивĕçрĕ. Надежда Михайловна Шетмĕпуçĕнчи çыхăну уйрăмĕн почтальонĕнче тăрăшать. Çемьере виçĕ ача – Никита, Диана тата Доминика. Сертификатсене вĕсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Юрий Попов тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев пачĕç.**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Республикăра

## Ларăва хутшăннă

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев февралĕн 3-мĕшĕнче Етĕрне хулинче ĕçлĕ çул çӳреврe пулнă.

Республика Пуçлăхĕ Чăвашпотребсоюз тытăмĕнчи «Ядринский мясокомбинат» чикĕленĕ яваплăхлă пĕрлешӳ ĕçĕпе паллашнă. Пахалăхлă та экологи тĕлĕшĕнчен таса продукцие халăх тăтăшах ыйтнине кура М. Игнатьев предприятие тулли хăватпа ĕçлеттерме сĕннĕ.

Республика Пуçлăхĕ Етĕрне районĕн иртнĕ çулхи экономикăпа социаллă аталанăвне халалланă ларăвне хутшăннă. Ăна уçнă май вăл районти чи хастар ĕçченсене, çамрăк ăрăва наградăсем парса, стипендие тивĕçнисене, амăш капиталне илме тивĕç çемьесене сертификатсем парса чысланă.

«Влаç органĕсенче ĕçлекенсем республикăра пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе ĕçлеççĕ. 2013 çулти экономикăпа социаллă аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем республикăра пĕтĕмĕшле ăнăçлă. Эффективлă ĕçлесе пыракан ял хуçалăх таварĕсене тирпейлекенсем, ăнăçлă предпринимательсем – çынсене лайăх ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерекенсем пур. Малашнехи ӳсĕм эпир резервсемпе мĕнле усă курнинчен, инвесторсене хамăр тăрăха активлă явăçтарнинчен килет», – тесе палăртнă Михаил Игнатьев.

Çав вăхăтрах Чăваш Ен Пуçлăхĕ Етĕрне районĕнчи демографи лару-тăрăвĕ лайăхах маррине палăртса халăха сывă пурнăç йĕркине тытса пыма явăçтармаллине те каланă.

## Кăлтăксем ан пулччăр

Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. Игнатьев февралĕн 1-мĕшĕнче хула тата район администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе видеоканашлу ирттернĕ.

Хутса ăшăтмалли тапхăрта республикăри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ĕçĕ, энергоресурссемпе усă курнăшăн парăм пухăнни – канашлура çак тата ытти ыйтусене пăхса тухнă.

ЧР строительство министрĕ О. Марков хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланнăранпа республикăн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ тата топливăпа энергетика комплексĕ пĕр тикĕс ĕçлени пирки пĕлтернĕ. Çак тапхăрта авариллĕ 24 лару-тăрăва шута илнĕ. Çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан пысăк аварисем пулман. Авиадиспетчер службисем талăкĕпех ĕçленине, коммуналлă котельнăйсене, пысăк пĕлтерĕшлĕ объектсене энергин резерв çăл куçĕсемпе тивĕçтернине каланă министр.

Усă курнă энергишĕн парăма татас ыйтупа çине тăрсах ĕçлеççĕ. 2014 çулхи январĕн 24-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсен парăмĕ 2334 миллион тенкĕпе танлашнă. Çут çанталăк газĕпе усă курнăшăн Комсомольски тата Муркаш районĕсем туллин тӳлесе татнă. Чи пысăк парăмсем вара Куславкка, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсен тата Улатăрпа Çĕмĕрле хулисен.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ районсен ертӳçисене итленĕ. Кун пек кăлтăксем ӳлĕмрен ан пулччăр тесен ертсе пыракан компанисен ĕçсене çивĕчрех тĕрĕслесе тămаллине уйрăммăн палăртса хăварнă.

Çĕр-шывра

## Олимп вăййисене пăхăр

Эрне кун, февралĕн 7-мĕшĕнче, Сочи хулинче хĕллехи çирĕм иккĕмĕш Олимп вăййисем пуçланаççĕ. Вăйăсем 16 куна тăсăлаççĕ: февралĕн 7–23-мĕшĕсенче иртеççĕ. Хыççăнах, мартăн 7–16-мĕшĕсенче, вун пĕрмĕш Паралимп вăййисем пулаççĕ.

Олимп вăййисенче спортсменсем пурĕ наградăсен 98 комплектне çĕнсе илессишĕн спортăн 15 тĕсĕнче тупăшĕç. Раççейре иртекен Олимп вăййисене 80  яхăн çĕр-шыври 5500 ытла спортсмен тата команда членĕсем хутшăнасси паллă. Сочире 25 пин волонтер ĕçлĕ, пресса представителĕсемпе фотографсем чылайăн пулĕç – 12 пине яхăн çын. Телевизорпа вара вăйăсене 3 миллиард çын пăхĕ.

Олимп вăййисене уçнине «Раççей1» телевидени каналĕ тӳрĕ эфирпа эрне кун, февралĕн 7-мĕшĕнче, 20 сехет те 14 минутра кăтартма тытăнать.

Спорт

## Турнира çитсе курăр

Февралĕн 7-мĕшĕнче Муркашра пысăк спорт уявĕ уçăлать – Совет çарĕсене Афганистанран кăларнине асăнса, интернационалист салтаксене халалласа Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн республикăри иккĕмĕш усă турнир иртет. Кăçал ăна пирĕн район 70 çул тултарнине те халаллаççĕ.

Турнир эрне кун 15 сехетре савăнăçлă лару-тăрура уçăлать.

Бокс кĕрешĕвĕсем пĕр кун кăна пымаççĕ – февралĕн 7–9-мĕшĕсенче ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕ – «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче иртекен кĕрешӳсене кашниех çитсе курма пултарать.

Техника хуçисем валли

## «Снегоход» операци

ЧР хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев, ЧР ШĔМ министрĕ С. Семенов, Чăваш Республикинчи гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру Патшалăх комитечĕн ертӳçи В. Петров, тăван тавралăха сыхлакан патшалăх службин ертӳçи Н. Кузюков январĕн 29-мĕшĕнче «Снегоход» профилактика операцийĕ ирттерме пĕрлехи приказ кăларнă. Операци февралĕн 1 – 28-мĕшĕсенче иртет.

Саккунпа килĕшӳллĕн юр çийĕн пысăк хăвăртлăхпа çӳрекен техникăна туянсан вĕсен хуçисен 10 талăкра патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕнче регистрациленмелле. Çул çине тухнă чух çумра унпа çӳреме удостоверени (тракторист-машинистăн «А-1» категорийĕ), регистраци свидетельстви, огнетушительпе медаптечка пулмалла. Кунсăр пуçне çулленех техника тĕрĕслевне тăрса унпа çӳреме ирĕк илмелле.

**С. НИКОЛАЕВ, патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ.**

Граждансене йышăнаççĕ

***«Единая Россия» партин Муркашри вырăнти уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене февраль уйăхĕнче çак йĕркепе йышăнаççĕ:***

**Февралĕн 7-мĕшĕнче** – Игорь Васильевич Николаев, район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ, партин вырăнти политканашĕн членĕ.

Йышăну – 10 сехетрен тытăнса 12 сехетчен.

**Февралĕн 21-мĕшĕнче** – Ростислав Николаевич Тимофеев, район администрацийĕн пуçлăхĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн секретарĕ.

Йышăну – 10 сехетрен тытăнса 12 сехетчен.

**Февралĕн 28-мĕшĕнче** – Владимир Петрович Мидуков, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ.

Йышăну – 13 сехетрен тытăнса 15 сехетчен.

# Аталану ăнăçлăхĕ хамăртанах килет

## Иртнĕ çул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май

**Канашлăва хутшăнакансем Муркаш районĕн пуçлăхĕн – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн И. Николаевăн депутатсен районти Пухăвĕ 2013 çулта мĕнле ĕçлесе пыни тата кăçал умра тăракан задачăсем пирки, çавăн пекех район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев районăн 2013 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсем тата 2014 çулта умра тăракан задачăсем çинчен туса панă доклачĕсене итлесе сӳтсе яврĕç.**

Игорь Васильевич палăртнă тăрăх отчетлă тапхăрта депутатсен районти Пухăвĕ хăйĕн ларăвĕсене 7 ирттернĕ, тĕрлĕ ыйтусене пăхса тухса вĕсенче депутатсем 69 йышăну тунă. Ытларахăшĕ вĕсенчен право акчĕсене çирĕплетессипе, пурлăх ыйтăвĕсене татса парассипе çыхăннă.

Район бюджетне йĕркелессин тата пурнăçлассин ыйтăвĕсем тĕп вырăнта пулнă. Район бюджетне пурнăçлассипе çыхăннă ыйтусене яланхи комиссисен ларăвĕсенче тĕплĕ тишкернĕ, депутатсен Пухăвĕ бюджета 5 хутчен улшăнусем кĕртнĕ.

Районăн пĕрлехи бюджечĕ иртнĕ çул тупăшсем енĕпе 548,3 млн. тенкĕпе, расхутсем енĕпе 568,3 млн. тенкĕпе танлашнă. Унччченхи пекех 2013 çулта та район бюджечĕ хăйĕн социаллă пĕлтерĕшлĕхне сыхласа хăварнă.

Вăхăтран вăхăта депутатсем ял хуçалăх производствине аталантарассипе çыхăннă ыйтусене те кун йĕркине кĕртнĕ. Кунпа пĕрлех экономика аталанăвĕн, налуксемпе тӳлевсем пухассин ыйтăвĕсене тишкермен мар.

Муниципалитет пурлăхĕпе, çĕрпе усă курассипе, куçман пурлăх объекчĕсене харпăрлăха çирĕплетессипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухса тивĕçлĕ йышăнусем тунă. Муниципалитет пурлăхĕпе эффективлă усă курассин ыйтăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавна май депутатсем асăннă ыйтăва кăçал та пысăк тимлĕх уйăрĕç.

Кăçал Раççей Бюджет кодексне улшăнусем кĕртрĕç. Çавна май 2014 çулта депутатсен Пухăвĕн ларăвĕсенче тĕрлĕ енпе аталанăвăн тĕллевлĕ программисене пурнăçласси мĕнле пулса пыни пирки информацисем итлессине практикăлама палăртаççĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн 2014 çулхи ĕç планне çирĕплетнĕ чухне те çавна шута илнĕ.

Районта проблемăллă ыйтусенчен пĕри вăл Муркашри лицей çуртне реконструкци туса пĕтерсе ача сачĕ уçасси пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе район администрацийĕн тата подрядчик пулса тăракан «Мера» ООО ĕç-хĕлне тишкерме депутатсен комиссине йĕркеленĕ пулнă. Сентябрĕн 18-мĕшĕнче ку ыйтăва Пуху ларăвĕнче пăхса тухнă. Район администрацине те, подрядчика та депутатсен корпусĕ ĕçлĕ сĕнӳсем панă.

Октябрĕн 11-мĕшĕнче тĕрĕслевпе шутлав органне йĕркеленĕ. Ку орган район бюджечĕн укçи-тенкипе, муниципалитет пурлăхĕпе эффективлă усă курнине тĕрĕслесе тăрĕ. Ял тăрăхĕсем те ку функцие асăннă органа шанса панă. Тĕрĕслевпе шутлав палати ирттернĕ тĕрĕслевсен итогĕсене яланхи комиссисен ларăвĕсенче, кирлех пулсан депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕсенче те пăхса тухĕç.

Ял тăрăхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çыхăнса ĕçлесси те пĕлтерĕшлĕ самантсенчен пĕри пулса тăрать. Депутатсем ял тăрăхĕсенче тăтăшах пулаççĕ, пĕрлехи информаци кунĕсене хутшăнса вырăнсенчи депутатсемпе, ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ. Çавăн пекех малашне территорисен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем ял тăрăхĕсен депутачĕсемпе çыхăнса ĕçлесси пирки информацисем депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕсенче те итлеме палăртса хунă.

Çамрăксем, кадрсен резервĕ пирки те манма юрамасть. Çавна шута илсе тата яш-кĕрĕме районăн обществăпа политика пурнăçне активлăрах явăçтарас тĕллевпе депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе депутатсен Пухăвĕ çумĕнче Çамрăксен парламентне йĕркеленĕ. Çулталăк хушшинче вĕсен членĕсемпе тĕл пулусем тăтăшах ирттернĕ, тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе явнă. Дублер кунне ирттерме те сĕнӳ пур. Ун чухне вĕренекен тата ĕçлекен çамрăксем хăйсене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳçисен шайĕнче тĕрĕслесе пăхма пултарĕç.

Ăслă-тăнлă, хастар, пултаруллă ĕçченсем – районăн пысăк пуянлăхĕ. Вĕсем хушшинче тĕрлĕ наградăсене тивĕçнисем сахал мар. Предприятисемпе организацисем ыйтнисене тивĕçтерсе депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕсенче производствăра малта пыракансене наградăлама тăратасси пирки ыйтусем пăхса тухнă. 2013 çулта 4-на Чăваш Республикин хисеплĕ ячĕсене панă, 14-ăн депутатсен районти Пухăвĕн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.

Ытти пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе пĕрлех Игорь Васильевич 2014 çулхи тĕп задачăсене те палăртрĕ. Кусем вĕсем район бюджетне, муниципалитетăн тĕллевлĕ программисене пурнăçласси, Пуху йышăнăвĕсене пурнăçлассипе тĕрĕслев витĕмне, çынсен культура шайне ӳстерессси, тирпей-илемпе çыхăннă ыйтусем, район территорийĕнче социаллă тăнăçлăха çирĕплетсе пырасси.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн иртнĕ çулхи итогĕсем тата 2014 çулта умра тăракан задачăсем çинчен канашлура анлă доклад туса пачĕ. Иртнĕ çул район бюджечĕн шутĕнче район шайĕнче пухăнакан укçа-тенкĕ виçи палăрмаллах ӳснĕ. Вăл 177,7 млн. тенкĕпе е пĕтĕм бюджетăн 32,6 проценчĕпе танлашнă. Çавна май район бюджечĕн тупăш шайĕ те 2012 çулхипе танлаштарсан 14 процент ӳснĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсем пĕтĕмпе 445 млн. тенкĕлĕх продукци туса илнĕ. Унччченхи çулхинчен ку вăл 8 процент нумайрах. Апла пулин те районĕпе пĕтĕмĕшле аш-какай, сĕт туса илесси те чакнă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăхсен йышне чакарса пыни те йĕркеллĕ пулăм мар. Ростислав Николаевич çавна май ял хуçалăхне пысăкрах инвестицисем хывма майсем туса парассипе ытларах ĕçлемеллине палăртрĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен те çак ĕçрен айккинче тăрса юлмалла мар. Ял хуçалăхĕ умĕнче кăçал тăракан тĕп задачăсем шутĕнче вара район администрацийĕпе ЧР Ял хуçалăх министерстви хушшинче тунă килĕшӳри тĕллевлĕ кăтартусене, вăл шутра ĕç укçи шайĕ енĕпе те тивĕçтерессси, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварасси тата ӳстерсе пырасси, машинăпа трактор паркĕсене çĕнĕ техникăпа тивĕçтерессси, çĕнĕ проектсене пурнăçа кĕртме инвестицисем явăçтарасси, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăрасси тата усă курман çĕр лаптăкĕсене пусă çаврăнăшне кĕртесси, программăсене хутшăнса ялта ĕçлесе пурăнма йĕркеллĕ условисем туса парасси пулса тăраççĕ.



Районта промышленноç продукцийĕ туса кăларассинче «Сеспель» предприяти тӳпи пысăк. Иртнĕ çул предприяти 1 млрд. та 578 млн. тенкĕлĕх продукци туса кăларса ăсатнă. Муркашри кирпĕч завочĕн кăтартăвĕ 105 млн. тенкĕ, «Моргаушская» строительство организацийĕн – 61 млн. тенкĕ. Промышленноç тата пулăшу сферин предприятийĕсем умĕнче вара çĕнĕ продукци тĕсĕсене туса кăларассине йĕркелени, производствăна инвестицисем явăçтарни, производствăна аталантарнă май çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.

Районта юлашки çулсенче потребительсен рынокĕ япăх мар аталанса пырать. 2013 çулта ваккăн тавар сутассин калăпăшĕ 1 млрд. та 76 млн. тенкĕпе танлашнă. 2012 çулхи танлаштаруллă хаксемпе пăхсан вăл 102,1 процент пулать.

Услугăсемпе тивĕçтерессси те япăх шайра мар. Иртнĕ çул тӳлевлĕ пулăшу ĕçĕсене пĕтĕмпе 218,6 млн. тенкĕлĕх пурнăçланă (унччченхи çулхипе танлаштарсан 113,8 процент).

Строительство сфери районта ăнăçлă аталанать. Пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă объектсем, çулсем тăвасси тата юсасси япăх шайра мар. Пур çăл куççене те шутласан инвестици активлăхне аталантарма пĕлтĕр 1млрд. та 480 млн. тенкĕ уйăрнă. 29388 тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă. «Моргаушская» строительство организацийĕ Муркашра 24 хваттерлĕ çурт хута янă, халĕ Москакассинче 21 хваттерлĕ çурт тăвас ĕççем пыраççĕ. Мăн Сĕнтĕрте вара 51 хваттерлĕ çурт тума пуçăннă. Иртнĕ çул Аслă Отечественнăй вăрçăн 17 ветеранне çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 18 млн. та 497 пин тенкĕ уйăрса парса пулăшнă.

Лайăх еннелле пулнă палăрăмлă улшăнусем кашни отрасльтех пур. Çакă Ростислав Николаевич тунă тишкерӳрен те аван курăнать. Вăл районти вĕренӳ, сывлăха сыхлас ĕç, культура, физкультурăпа спорт, социаллă политика, çынсене ĕçпе тивĕçтерессси, демографи лару-тăрăвĕ, администраци реформисене пурнăçа кĕртесси, муниципалитет пурлăхĕпе тата çĕр ресурсĕсемпе туллинрех усă курасси çинче тĕплĕ чарăнчĕ, иртнĕ çулхи ĕç-хĕле хак панипе пĕрлех малашлăх задачисене те пысăк тимлĕх уйăрчĕ.

«Иртнĕ ĕç çулталăкĕнче районта сахал мар ĕç пурнăçланă, лайăх кăтартусем çук мар. Çапах та проблемăсем те пур-ха. Вĕсене татса памалли çул-йĕре пĕрле шырас пулать, алла-аллăн тытăнса пĕрле ĕçлемелле», – палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев. Пĕрлехи ĕçре пулăшса пынăшăн, пĕр-пĕрне ăнланса килĕштерсе ĕçленĕшĕн Ростислав Николаевич Чăваш Ен Пуçлăхне, республика Правительствине, депутатсен корпусне, предприятисемпе организацисен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, общество формированийĕсен ертӳçисене тав сăмахĕ каларĕ.

Е. Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăх та иртнĕ çул ӳсĕм çулĕпе малаллах утăмланă. Çакна хăйĕн сăмахĕнче хуçалăх ертӳçи В. Семенов палăртрĕ. Тĕш тыррă культурисене кашни гектар пуçне вăтамран 22,6 центнер пухса кĕртнĕ. Халĕ вăл 600 тоннăна яхăн сутмалăх та пур. Хуçалăх çулталăка самай тупăшлă вĕçленĕ, măйракаллă шултра выльăхсен йышне сыхласа хăварнă, пăрусем илесси лайăхланнă. Хуçалăх усă куракан çĕр лаптăкĕсене харпăрлăха çирĕплетессипе пысăк калăпăшлă ĕç пурнăçланă. Халĕ вара вĕсемшĕн налук тӳлессипе самай расхутланма тивет. Çавна май Виталий Иосифович çĕре харпăрлăха куçарнă хуçалăхсем тĕлĕшпе район администрацине хăш-пĕр çăмăллăхсем пăхса хума сĕнчĕ.

Чуманкассинчи вăтам шкул директорĕ В. Васильев вĕренӳ ĕçне модернизацилемеллин программине хутшăнса хăйсем патĕнче пысăк калăпăшлă ĕççем туса ирттерме май килнине палăртрĕ. Юлашки çулсенче шкулăн çивиттине тĕпрен юсанă, пластик чӳречесем лартнă, шкул столовăйне тĕпрен юсаса çĕнĕ оборудовани, сĕтел-пукан вырнаçтарнă, çĕнĕ компьютер техники туяннă. Иртнĕ çулах шкулăн хăйне уйрăм котельнăйне хута яма май килнĕ.

Усси куç умĕнчех. Унччен шкул çуртне хутса ăшăтнăшăн уйăхне 140 пин тенкĕ таран тӳлеме тивнĕ пулсан, хальхи вăхăтра тӳлев сумми 40 – 45 пин тенкĕрен ытла мар.

Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Волков хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Ял тăрăхĕн бюджечĕ 6445 пин тенкĕпе танлашать. Кунта вырăнта пухăнакан укçа-тенкĕ шайне ӳстермелли майсемпе анлă усă курма тăрăшаççĕ. Апла пулсан вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама та майсем ытларах. Акă иртнĕ çул ялсенчи уйрăмах проблемăллă çулсене пурне те май килнĕ таран юсама пултарнă.

Сывлăха сыхлас ĕç отраслĕнче те ырă улшăнусем палăрăмлă. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов каласа панă тăрăх сывлăха сыхлассин сферинче 552 çын вăй хурать. Врачсем 83-ĕн. Вĕсенчен 16-шĕ чи аслă категорие тивĕçнисем, 1-мĕш категориллисем 23 врач. Кадрсем çитеççĕ. Анчах та ыйтусем те пур-ха. Районта иртнĕ çул 1 çула çитмен ачасем вилнĕ тĕслĕх 7 пулни хытах шухăшлаттарать.

Владислав Григорьевич поликлиника çуртне тĕпрен юсаса анлăлатас, районта эрех ĕçнипе çине тăрса кĕрешес, диспансеризацие пурне те явăçтарас ыйтусене те хускатрĕ. Районти 2-мĕш номерлĕ больница шăпи пирки ыйту çине хуравланă май вара вăл малашне те ĕçлесси, анчах та хирурги уйрăмне централизацилеме тивесси пирки асăнчĕ.

Канашлура ытти ыйтусене те хускатакансем пулчĕç. Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ В. Краснов пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисем пушанса пынине, выльăхсен йышне чакарса пынине курсан чун ыратни пирки каларĕ. Çĕр улми туса илессипе район малтанхи вăхăтра ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăни те халĕ асăмăрта кăна.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов районта туризма аталантарассипе ытларах ĕçлеме сĕнчĕ. Çыннăн ĕçлеме кăна мар, канма та пĕлмелле. Çавна валли майсем те пулмалла. Ку тĕлĕшпе Ильинка зонине аталантарасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кунпа пĕрлех Мăн Сĕнтĕрсене Сĕнтĕр юхан шывĕ юшкăнпа тулса ларни те хумхантарать.

Тухса калаçакансен ыйтăвĕсемпе сĕнĕвĕсем çине хуравланă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çавна палăртрĕ. Ял хуçалăхне инвесторсене явăçтарни ку сферăри лару-тăрăва самай лайăхлатма тивĕç. Çавăнпа район администрацийĕ ку ыйту çине малашне ытларах тимлĕх уйăрĕ. Е. Андреев яч. хис. хуçалăх ертӳçин сĕнĕвĕ пирки калас пулсан вара ку ыйтăва депутатсемпе сӳтсе явнă хыççăн май килнĕ таран тивĕçтерме май пулмалла.

Туризма аталантарас ыйтупа район администрацийĕ ĕçлемест мар. Ильинка тăрăхĕнче çĕр арендин унччченхи килĕшĕвĕсене пăрахăçласа ку çĕр участокĕсене муниципалитет харпăрлăхне куçарма тытăннă. Арендаторсем условисене пурнăçламан пирки паянхи куна кун пек 2 килĕшĕве пăрахăçланă ĕнтĕ. Пĕр участокĕнче Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнакансем спорт площадки йĕркелес кăмăллă. Туризма аталантарассин ыйтăвĕсемпе ĕçлесси малашне район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн компетенцийĕнче пулĕ.

Республика гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ В. Петров Муркашсен ĕçне-хĕлне çапла хак пачĕ: «Район республика шайĕнче ытларах енĕпе ытти районсем хушшинче малтисенчен пĕри. Анчах та лăпланса ларма сăлтав çук. Ыйтусем пур. Ял хуçалăх производствин тухăçлăхĕ енĕпе ытларах ĕçлемелле».

Вениамин Иванович асăннă тăрăх республикăра та, районта та пушарсен хисепĕ, вĕсенче вилекенсен шучĕ чакса пырать. Апла пулин те пушарсен тĕп сăлтавĕсем пирки манма кирлĕ мар. Кусем вĕсем электропроводка юсавсăрри, ӳсĕрле пирус туртни, кăмакасен юсавсăр мăрйисем. Пурлăхпа пĕрлех кашни çын пурнăçĕ епле хаклă пулни пирки самантлăха та манмалла мар. Çынсемпе ăнлантару ĕçне анлăрах туса пыни кирлĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Ю. Попов хăйĕн сăмахĕнче республикăн юлашки çулсенчи ӳсĕмĕсем çинче чарăнчĕ. Чăваш Ен пĕр çын пуçне пурăнмалли çурт-йĕр тăвассипе Атăлçи федераци округĕнче 1-мĕш, Раççейре 6-мĕш вырăнта. Пирĕн республика спортпа çывăх пулассипе чи ăнăçлă регион шутланать. Вĕренӳре, ытти сферăсенче те курăмлă çитĕнӳсем пур. Юрий Алексеевич ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен ответлăхĕ çирĕп пулмаллине уйрăммăн палăртрĕ. «Енчен те предприятире ĕç укçи шайĕ пурăнма кирлĕ минимумран та пĕчĕкрех пулсан, ирĕксĕрех ыйту тухса тăрать: кирлех-и кун пек ертӳçĕ?» – терĕ вăл. Муркашсен кăçалхи ĕç итогĕсем вара иртнĕ çулхинчен сумлăрах пуласса шанни пирки пĕлтерчĕ.

Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕççене активлă хутшăннăшăн анлă канашлура Муркашри кирпĕч завочĕн садчикне А. Кирпичниковăна тата Катькасри ветеринари участокĕн заведующине В. Лебедевăна ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине парса чысларĕç, районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнисем район администрацийĕн Хисеп грамотине тивĕçрĕç.

Çавăн пекех тивĕçнисене канашлура ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене, нумай ачаллă çемьесене тӳлевсĕр çĕр участокĕ илме сертификатсем пачĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Йĕлме йĕлтĕр шурĕ, шурĕ...

**«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2014» ăмăртăва иртнĕ вырсарни кун Муркашра йышлăн пухăнса ирттерчĕç. Ура çине тин кăна çирĕппĕн пусма пуçланă ача-пăчана та, сумлă ӳсĕме çитнисене те йăлана кĕнĕ вырăнта – Муркашри стадион патĕнче курма май пулчĕ.**

Раççейре çак массăллă стартсене тахçантапах ирттерме тытăннă. Кăçал вĕсем çĕр-шывра 32-мĕш хут иртрĕç пулсан, регионсемпе муниципалитетсенче – 10-мĕш хут. 2014 çул вара спорт тĕлĕшпе пирĕн çĕр-шывшăн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кăçалхи массăллă ăмăрту Сочири Олимпиада умĕн иртнине, 1980 çулхи Олимпиада та Раççейре иртнине асă илтерсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пирĕн районта пурăнакансем те спортăн хĕллехи тĕсĕсене кăмăлланине палăртрĕ, пурне те ăнăçлă стартсем сунчĕ. Унăн шухăшне малалла тăсса район пуçлăхĕ И. Николаев Муркашсене пысăк спортри спортсменсене хăйсен çирĕп кăмăлĕпе, мал туртăмлăхĕпе тĕслĕх кăтартма та сунчĕ.



Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев финишаваскать.

Спортпа туслă пулни кашни çыннăн лайăх енĕ, çакна пурнăç хăех кăтартса парать. Акă Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн ертӳçи В. Петров та хăйĕн салам сăмахĕнче спорт вăл ӳтпӳ, кăмăл-туйăм вăйĕ те, сывлăх та, çĕр-шыв пуласлăхĕ те, тесе палăртрĕ.

Спорт уявне пухăннисене саламланă хыççăн ертӳçĕсем хăйсем старта пĕрремĕш тухса ыттисене хавхалантарчĕç, тĕслĕх кăтартрĕç.

Ачасем вара, уйрăмах пĕчĕккисем, хăйсен стартне кĕтсе унталла-кунталла ярăнса çӳрерĕç, ал-ура мышцисене çемçететпĕр теме те пĕлеççĕ шăпăрлансем. Муркашра пурăнакан Слава Миронов старта тухиччен хăй чи кĕçĕн хутшăнакан пулнине тавçăрман паллах. Пĕтĕмлетӳ хыççăн ятарлă грамотăпа кубока тата депутатсен районти Пухăвĕн председателĕнчен ятарлă парнине тивĕçнĕшĕн çак 5 çулти арçын ача питĕ хавхаланни палăрчĕ. Унпа пĕрле ăмăртăва 5 çулхи Карина Порфирьева та тухнă, анчах кăçал старта хутшăнма хатĕрех маррине пĕлтерчĕ Муркаш хĕр ачи.

2005 çулта çуралнисен тата кĕçĕнреххисен ӳсĕмĕнче тупăшакан арçын ачасем старт илчĕç. Куçа тӳрех 71 номерлĕ арçын ача курăнчĕ – чи малта çил пек пырать. Вăл 1 çухрăмлă дистанцие çăмăллăнах парăнтарчĕ. Çак маттур арçын ача Муркашри Игорь Белов пулнă иккен. Кăшт каннă хыççăн ăна хăйĕнчен аслăраххисен, 2003–2004 çулсенче çуралнисен, стартĕнче те курма пулчĕ. Хастарскер çаксене те хыçа хăварма пултарчĕ! Паллах, ăмăрту условийĕсемпе ăна малти вырăна хăйĕн ӳсĕмĕнче тивĕçнине палăртрĕç, анчах та хăйĕншĕн икĕ хут çĕнтерӳçĕ пулма пултарни ӳсĕм картлашкипе ăна çӳлерех хăпартрĕ пулĕ.

**Спорт тата сывă пурнăç йĕрки**



12 сехетри чи массăллă старт.



Район пуçлăхĕ И. Николаев та старта тухрĕ.



Ача-пăча искусство шкулĕн ташă ушкăнĕ уява усрĕ.



Спорт ветеранĕсем – М. Романовпа А. Васильев.




Ильинкăсем старта хатĕр.



Тантăшĕсене хыçала хăварнă Игорь Белов.

# Йĕлме йĕлтĕр шурĕ, шурĕ...



Кубок – чи кĕçĕн хутшăнакана.

2005 çулта çуралнă тата кĕçĕнрех хĕр ачасенчен Çатракассинчи Виолетта Петрова мала тухма пултарчĕ.

2003–2004 çулсенче çуралнисен йышĕнче Нискассинчи вăтам шкулти Анастасия Попугаева тата Çатракассинчи вăтам шкулти Алексей Якимов çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕç.

2001–2002 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче Игорь Павлов (Çатракасси) тата Екатерина Костина (Ярапайкасси) палăрчĕç.

1999–2000 çулсенче çуралнисенчен Александра Вострейкинăна (Калайкасси) тата Станислав Степанова (Çатракасси) çитекенсем пулмарĕç.

1997–1998 çулсенче çуралнисенчен финиша пуринчен малтан Светлана Иванова (Муркаш) тата Антон Баранов (Калайкасси) çитрĕç.

1996 çулта çуралнă тата аслăраххисен старчĕсем, шкул ачисенни пек йышлах мар пулин те, хаваслă иртрĕç. Ильинка ял тăрăхĕнчи Анатолий Иванов тата районти шалти ĕçсен пайĕн командинчи Татьяна Иванова мала тухрĕç.

Кирек епле ăмăрту та ветерансем хутшăннипе паха. Йĕлтĕр йĕрĕ çине кăçал та сахаллăн мар тухрĕç вĕсем. Спортри аксакалсем – Муркаш ял тăрăхĕнчи Михаил Ананьевич Романовпа(СССР спорт маçтăрĕ) Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Аверкий Васильевич Васильев (ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ) – кашни çул пуçарулăхпа палăраççĕ. Кăçал акă Михаил Ананьевич 50-ран иртнисен йышĕнче 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, Аверкий Васильевич вара ăмăртăва чи аслă хутшăнакан пулчĕ.

40-рен аслăраххисен ăмăртăвне пĕтĕмлетнĕ хыççăн Надежда Леденцовăпа (Ильинка) Николай Скворцов (Çатракасси) мала тухни палăрчĕ. 50-ран иртнисем хушшинче Светлана Васильева (Муркашри тĕп больница) тата Владимир Иванов (Шетмĕпуç) çĕнтерме пултарчĕç.

Ăмăртăва, шел пулин те, малтан пĕлтернĕ пек Олимп факелĕ «çитеймерĕ», анчах та Ильинкăри информаципе культура центрĕн директорĕ Наталья Сергеева хăйĕн тумĕпе, хăйĕн хаваслăхĕпе кашниннех кăмăлне хăпартма пултарчĕ: ура тупанĕ таран юбкăпа пулин те йĕлтĕр йĕрĕ çинче пĕрре те такăнмарĕ вăл, пĕрре те ӳкмерĕ!

Йĕлтĕр йĕрĕ çине тăманнисене хĕллехи сивве парăнтарма Муркаш райповĕн ĕçченĕсем хатĕрлесе панă вĕри чей, кукăль-çăмахĕпе шашлыкĕ пулăшрĕç. Кунти йĕркелĕхшĕн яваплă полицейскисем те хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлани палăрчĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.



5 çулти Карина Порфирьева интервью пама та килĕшрĕ.



Ӳкесси финишра та пулать.



Йĕлтĕр йĕрĕ çинче Нискассисем маттур пулчĕç.

Юбилей

# Тимлĕх – сумлă ватăсене

***Январь уйăхĕ пирĕн районта пурăнакан ватă çынсен сумлă юбилейĕсемпе пуян пулчĕ. 90 çул тултарнисене тата аслăраххисене юбилейпа саламлама кашнин патнех район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев е администрацин яваплă ĕçченĕсем çитсе килчĕç, РФ Президенчĕн В. Путинăн салам открыткисене, район администрацийĕн Тав çырăвĕсене çитерчĕç, парнесемпе савăнтарчĕç.***

**Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Шарпашра пурăнакан Христина Евстафиевна Павлова 90 çул тултарнине январĕн 31-мĕшĕнче паллă турĕ.** «Паян пурнăç йывăр текенсем тĕрĕс каламаççĕ, халĕ пурнăç лайăх. Савăнса пурăнмалла», – тет вăрçă çулĕсенчи тата ун хыççăнхи йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма хăнăхнă, ĕçрен хăраман сумлă ватă. Ĕçчен карчăк паян та çамрăк чухнехи пекех вăр-вар, хаçат-журнал вуланă чухне куçлăх тăхăнмасть-ха. Вăрçă çулĕсенче вара Христина Евстафиевна вăрман касма çӳренĕ, окопсем чавнă. Çынсем те, лашасем те выçă пулнă ун чух. Çапла пĕрре вăрман касса таврăннă чух лаша ансах ӳкнĕ. Лаша çунине хĕрарăм хăй тăвалла туртса хăпартнă... Темĕн те тӳсме тӳр килнĕ. Паян Христина Евстафиевна хăйĕн виçĕ ачипе кăна мар,тăвату мăнукĕпе, виçĕ кĕçĕн мăнукĕпе савăнса пурăнать.

**Хорнуй ял тăрăхĕнчи Шаптакра пурăнакан Мария Николаевна Гордеева та 90 çулхи юбилейне паллă турĕ.** Ытти вăрçă ачисенни пекех унăн та çамрăклăхĕ çăмăл килмен. Вăрçă хыççăн çемье çавăрса мăшăрĕпе 4 ача çуратса çитĕнтернĕ. Паян вара Мария Николаевнăн 4 мăнукпа 2 кĕçĕн мăнук. «Пур тăвана та ман пек вăрăм ĕмĕр пурăнма сунатăп», – тет ăшă кăмăллă ватă. Ку таранччен çынпа вăрçса курманскер, хăйĕн ачисене те çакăн пек пулма вĕрентсе пынă. Ырă кăмăллă çынсем вара нумайрах пурăнаççĕ.

**Турайра пурăнакан Христина Егоровнăпа Георгий Тимофеевич Бычковсем иккĕшĕ те пĕр кунта, пĕр çулта çуралнă – 90 çулхи юбилее пĕрле кĕтсе илчĕç.** Георгий Тимофеевич Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, мотоциклист пулнă. Аслă Çĕнтерĕве вăл Прага хулинче кĕтсе илнĕ. Пулас мăшăрĕ вара вăл вăхăтра артельте чăпта тунă çĕрте вăй хунă. Пĕр урамрах пурăннă, анчах та малтан пĕрпĕрне «асăрхаман» çамрăксем 1952 çулта çемье çавăрнă. Георгий Тимофеевич агротехникра тăрăшнă, Советски районĕнчи 6 хуçалăхшăн ответлă пулнă. Каярах Турайри больницăра завхозра вăй хума тытăннă, Христина Егоровна унта конюхра ĕçленĕ. Тăватă ача çуратса ура çине тăратнă вĕсем. Паян вара савăнăçĕ татах та пысăкрах – Бычковсен 7 мăнукпа 4 кĕçĕн мăнук.

**Мăн Токшикри Татьяна Исаевна Вадимова вара иртнĕ кунсенче 95 çул тултарчĕ.** Ĕç ĕмĕрне вăл тăван хуçалăхра иртнерĕ. Татьянăсен çемйи, пилĕк ачаллăскер, Çĕпĕре куçса кайнă. Ун чухне Татьяна 3 çулта пулнă. Шел пулин те, амăшĕ нумаях пурăнаймасть, ашшĕ тепре авланать. Тăван мар амăшĕ вара юмахри пекех усал пулать: 13 çулти хĕр ача çакна тӳсеймесĕр çуралнă вырăна таврăнать. Уншăн ялти ватă, Якур, ашшĕ те, амăшĕ те пулса тăрать. 18 çулта Татьяна пĕр ялти Григорие качча тухать. Вăрçăран таврăннă мăшăрĕ нумаях пурăнаймасть – 45 çулта çĕре кĕрет. Вадимовсен 8 ачаран 6-шĕ кăна пурăннă, ытла та йывăр вăхăт пулнă çав. Паян вара Татьяна Исаевнăн пĕр ывăлĕ кăна пурăнать пулин те, 13 мăнукĕпе 12 кĕçĕн мăнукĕ – унăн пурнăçри савăнăçĕ.

# Шашка вăййи йыхравлать

*Спорт мастерĕн кандидачĕ, 6 хут район чемпионĕ, республикăри «Урожай» обществăн 2 хут çĕнтерӳçи Александр Ермолаев юлашки çулсенче районта хăйĕн ячĕпе шашкăлла выляссине ырă йăлана кĕртрĕ. Кăçал çак турнир 7-мĕш хут иртет. Вăйăра мала тухакансене Кубоксемпе медальсем тата Хисеп хучĕсем кĕтеççĕ.*

*Кăçалхи турнир февралĕн 8-мĕшĕнче Йӳçкассинчи Культура çуртĕнче 10 сехетре пуçланать. Ăмăртăва хутшăнакансене хапăл тусах кĕтетпĕр!*

**Хамăр инф.**

# «Манăн та йĕлтĕр йĕрĕ пур»



***85 çула пуссан та йĕлтĕр çине тăма кашнийĕнех май пур. Пăсăрманта пурăнакан Игорь Гаврилович Крысин пек, мĕншĕн тесен вăл нихăçан та пирус туртман, эрехпе иртĕхмен, паян кун та ĕçлеме ӳркенсе тăмасть.***

***Кашни ир ветеран хăйĕн пахчинчи йĕлтĕр йĕрĕ çине тухать.***

***– Манăн хамăн йĕлтĕр йĕрĕ пур, вăл 1200 метр тăршшĕ. Малтан кунта кашни ир 8–10 ункă ярăнаттăмччĕ, халĕ 4–5 ункă тăватăп, – тет Игорь Гаврилович.***

***Маттур ветеран кашни ире зарядкăран пуçлать иккен, хыççăн – ирхи апатчен – йĕлтĕр йĕрĕ çине васкать. Çапла пуçланакан кун, паллах, лайăх кăмăлпа тата тухăçлă иртет.***

***Пирĕн те кашнийĕнех Игорь Гавриловичран тĕслĕх илесчĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# «Шăпа çапла çырнă пуль...»

Район 70 çул тултарнă май

Муркаш салинчи Заводская урамра пурăнакан Н. Воробьева ĕç ветеранĕ юнашар мăнукĕ алăри кĕреçепе юрпа выляса пынине асăрхаманçи пулса хĕл илемĕпе киленсе утрĕ. Урамри каç шăплăхĕ асаннен шухăшĕсене иртни патне таврăнчĕ, аса илĕвне хускатрĕ. Сивĕ варкăш пит çăмартисене хĕретрĕ-чĕпĕтрĕ пулин те, çăлтăрла янкăр тӳпери тĕтрепе карталаннă çĕнĕ уйăх вăтанчăклăн çанталăк ăшăтасси пирки хыпарларĕ. Лапка-лапка çăвакан юр та çавнах систерчĕ. «Кун вăрăмланчĕ те çуркуннеччен инçе юлманни вăрттăнлăх мар. Кунсем ăшăтасси те çывăхах ĕнтĕ», – мăнукĕ çине кăмăллăн пăхса хăй ăшĕнче калаçрĕ ĕçĕпе ырă ята тивĕçнĕ хĕрарăм. Анчахрах 70 çул тултарнă Нина Сергеевна хăйне юбилей ячĕпе выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕ Н. Яковлев киле килсех Тав çырăвĕ панине хăйĕн ĕçне шута хуни тесе хакларĕ. Пуçран вара ĕнер кăна район хаçачĕн журналисчĕ килсе кайни тухмарĕ. Мĕн калăплĕç-ши ĕнтĕ, епле çитерĕç район тантăшĕн пурнăçне халăх патне?...

«Шăпа çырни, – тет чăваш хăйĕн пурнăçне тишкерме тата хак пама тăрсан. – Турă çырнинчен иртеймĕн». Шупашкар районĕнче 1944 çулта çуралса ӳснĕ вăрăм ĕç ĕмĕрĕллĕ Н. Воробьева та хăй Муркаша килсе кĕнине шăпа çырнипе танлаштарать. Кун пирки вăл ачалăхра та, хĕр чухне те шутламан та.

– Çӳлти хăватсене çапла кирлĕ пулчĕ пулас. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксем суранĕсене пула епле нушаланнине-асапланнине пăхма йывăрччĕ. Ирсĕр вăрçăна пула мана хамăн аттепе те тĕл пулма тӳр килмерĕ. Эпĕ çураличчен вăл 4 ачине арăмĕпе хăварса фронта тухса кайнă. Кайнă та вăрçă вутĕнче хыпарсăр çухалнă. Çак тĕрĕс марлăха çухатас тесе эпĕ 10 класс хыççăн сывлăх хуралçине вĕренес ĕмĕтпе пурăнтăм, тăрăшса вĕрентĕм,– сĕтел хушшине вырнаçса ларнă май калаçма пуçларĕ ĕç ветеранĕ.

Вĕренес ĕмĕчĕ пурнăçланать-ха унăн, анчах тухтăра вĕренме Хусана кайнă хĕре медицина институчĕн алăкĕ патĕнчен пурнăç тепĕр çул çине пăрса ярать. Вĕренме йышăнакан комиссире ветеринари институтĕнчен пынă çын ялтан килнĕ яшсемпе хĕрсене хăйсем патĕнче общежити пур, хваттер тытса пустуй укçа тăкмалла мар тесе унта пыма агитацилет. Çапла пулмалла пулнă-тăр. Ĕнер вунă класс ăнăçлă пĕтернĕ Нина та амăшĕнчен укçа ыйтас мар тесе ветеринари институтне вĕренме кĕрет. Çак утăмшăн вăл паян кун та ӳпкелешмест.

– Шăпа çапла çырнă пуль, – терĕ вăл хăйне тăрăшуллă ĕçшĕн панă Хисеп хучĕсемпе дипломсене уçса пăхнă май.

Çулсем чылай хыçа юлчĕç пулин те, хăй Муркаша епле килсе лекни унăн асĕнчен халĕ те тухмасть. 1964 çулта Муркаш районĕ иккĕмĕш хут йĕркеленсен Нинăна вĕренӳ практикине шăпах кунта яраççĕ. Пĕрремĕш каç хĕр-практиканткăн кирпĕчрен купаланă, çиелтен шăвăçпа витнĕ кăмакана хутса районти ветстанцирех çĕр каçма тивет. Нумай та мар маларах районти ветстанцие ертсе пыма пуçланă Михаил Алексеевич Миронов вара ăна тепĕр кунне ирлесех практикăна Мăн Сĕнтĕре кăларса ярать. Унти ветлечебницăра хăйĕн профессиллĕ ĕçĕн пĕрремĕш утăмĕсене тăвать те Шупашкар район хĕрĕ.

Кунти коллектива вăл çулсенче Елизавета Петрова ертсе пынă. Хастар хĕрарăм çамрăк хĕре хаваспах йышăннă. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ выльăх тухтăрĕ Елизавета Васильевна Нина пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать. Ун патĕнче практикăра пулнине Нина Сергеевна паян кунччене ăшшăн аса илет. «Ĕç пуçламăшĕнчех çакăн пек çынпа ĕçлеме тӳр килни манра та яваплăх туйăмне çивĕчлетрĕ, ĕмĕрлĕх урок пулчĕ», – кулса çеç пуплет ĕç ветеранĕ. Çакăнта пирĕн калаçу ветеринари станцийĕн историйĕ çине кĕрсе кайрĕ.

...1968 çулта районта ветеринари лабораторийĕ уçăлать. Муркашра вырăн пулманран ăна валли Мăн Сĕнтĕрти участокри ветлечебницăри пушă пӳлĕме уйăрса параççĕ. Çапла вара ветлаборатори Мăн Сĕнтĕрте 10 çул ĕçлет, районти выльăх-чĕрлĕх сывлăхĕ тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерет.

1978 çулта Муркашра ветстанцин çĕнĕ çуртне туса лартсан Мăн Сĕнтĕрти ветлабораторие те район центрне куçараççĕ. Ку вăхăтра манăн пĕлĕшĕм кунта практикăра мар ĕнтĕ – ĕçре пулнă.

– Практикăра пулсанах Муркаш çине куç хыврăр-и е урăх тем хистерĕ-и сире пирĕн тăрăха ĕçлеме килме? – кăсăкланатăп калаçăва тăснă май.

– Кунта та шăпа пӳрни тĕп вырăн йышăнчĕ. Ветеринари институчĕ хыççăн 1967 çулта мана Красноармейски районне ĕçлеме янăччĕ. Нимĕн те шутламастăп – ĕçлетĕп. Пĕр кунхине вара пуçлăхсем мана Муркаша чĕнни пирки пĕлтерчĕç. Манăн ĕçсене вĕсем эпĕ практикăра чухнех асăрханă иккен. Килĕшрĕм. Каллех Мăн Сĕнтĕр урамĕсемпе утма пуçларăм. Вăл вăхăтра ветеринари лабораторине Михаил Васильевич Мясников ертсе пыратчĕ. Ăста ертӳçĕччĕ, яланах çĕннине шыратчĕ. Ветеринари лабораторийĕ уçăличчен районти ветстанци пуçлăхĕн М. Мироновăн çумĕнче ĕçленĕскер района та лайăх пĕлетчĕ. Çавăнпа унпа ĕçлеме, тĕрлĕ ыйтусене вырăнтах татса пама çăмăлччĕ, – аса илӳ çăмхине малалла сӳтрĕ Н. Воробьева.

Каларăмăр ĕнтĕ, районти ветеринари службиpĕр вырăнта тăман. 1978 çулта Муркашра унăн çĕнĕ те хăтлă офисĕ ĕçлеме пуçлать. Ветлабораатори валли те унта кабинетсем пулаççĕ. Çапла вара кун йĕркине Мăн Сĕнтĕрти ветлабораторие Муркаша куçарас ыйту тухса тăрать. Çулĕ çывăх пулманнине ăнланса тата Мăн Сĕнтĕртех хăйĕн хваттер пулнине шута илсе М. Мясников Муркаша куçма килĕшмест, «Сундырский» совхозăн тĕп ветврачне ĕçе вырнаçать. Райцентра куçнă ветлабораторие ертсе пыма вара Нина Сергеевнăна шанаççĕ.

– Лабораторире вăл вăхăтра пĕтĕмпе 11 çын ĕçлеттĕмĕр. Вĕсенчен виççĕшĕ – тухтăрсемччĕ: мансăр пуçне Галина Тимофеевна Кирилловăпа Нина Сергеевна Воробьева. Ĕçĕ вара чылайччĕ. Эпĕ астăвасса вăл çулсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăна 50 пин пуçа яхăн сысначчĕ, 25 пин пуç ытла măйракаллă шултра выльăхчĕ, вăл шутра 8 пин пуç ытла сумалли ĕнеччĕ. Вĕсемсĕр пуçне кашни колхоз-совхозрах чăх-чĕп фермисем пурччĕ, сурăхĕ йышлăччĕ, лашисем нумайччĕ. Кусем çумне тата ял çыннисен килти хушма хуçалăхри выльăхĕсене хушăр та ĕç калăпăшне пĕтĕмлетĕр, – ман çине тинкерчĕ ветеран-ветврач. Çакăнта унăн калаçăвĕ ывăлĕсем – Эдуардпа Димитрий – çине куçрĕ. Хăй сывлăх хуралçи пулайманран аслă ывăлĕпе мăнукĕ çак çула суйласа илни тата ĕçтешĕсем хăйне манманни асаннен кăмăлне çемçетет паян.

... Çулталăк çурăри мăнукĕ выляса ывăннине ăнланса асанне ăна алă çине илсе килĕ еннелле утса кайрĕ. Иккĕн килнĕ ура йĕрĕсем çĕнĕ юр çийĕн пĕр мăшăра куçрĕç. Ĕçе юратса пурнăçне ăнтарнă хĕрарăм çулне урамри электричество хунарĕпе тупăшнă пекех уйăх та туллин çутатрĕ.



Ветлабораторире иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вăй хунă ĕçченсен пĕр ушкăнĕ. Сулахайран сылтăмалла: Нина Воробьева директор, Светлана Данилова лаборантка, Лидия Кудряшова санитарка, Галина Тимофеева ветврач-бактериолог.



1976 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнчи сăн ӳкерчĕкре Мăн Сĕнтĕрти Михаил Мясников (варринчи) ертсе пыракан ветлаборатори ĕçченĕсене куратăр. Сулахайран сылтăмалла пĕрремĕш ретре: Валентина Отенова санитарка, Римма Китова ветврач-химик-токсиколог, Зоя Кирпичникова санитарка; иккĕмĕш ретре: Михаил Яшмолкин водитель, Лидия Лаптева лаборантка, Нина Воробьева ветврач-серолог, Нина Макарова лаборантка.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксене çемье архивĕнчен илнĕ.**

# Вĕсене манма юрамасть

Асăну хăми уçрĕç




Аслă ăрурисем Тăван çĕр-шывăн 1941–1945 çулсенчи хаяр вăрçăн çапăçу хирĕсенче пуç хурса та юн тăкса фашизма çăварлăхланă йывăр та тискер вăхăт историе тарăнрах та тарăнрах юлса пырать. «Ан пултăрччĕ вăрçă», – тетчĕç кăшт ĕлĕкрех асăннă фронтран сывă таврăннисем тата çак сăмахсем таврах ирттереççĕ калаçусене çав вăрçăн паян та пурăнакан ветеранĕсем. Ан пултăрччĕ вăрçă... Анчах... Çĕр çинче ырăпа усал кĕрешнĕ чух вăрçă вут-çулăмĕ час-часах пирĕн тавра явăнать, ашшĕ-амăшĕсемпе çывăх тăванĕсен куççульне юхтарать, çамрăксен çутă малашлăх ĕмĕчĕсене татать. Алла автомат тытса çĕр-шыва юлашки юн тумламĕччен сыхлама тата унăн интересĕсене вĕçне çити хӳтĕлеме тупа тунă яшсем приказа туллин пурнăçласа пуç хунă... Манма юрамасть вĕсен паттăрлăхне.

Иртнĕ шăмат кун, нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă ветеран-салтаксен пысăк ушкăнĕ Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула пухăнчĕ. Çак кун кунта çакăнтан вĕренсе тухнă, интернационалла тивĕçе пурнăçласа юхан шыв леш енчи вăрçăра çамрăклах куçĕсене хупнă паттăрсене чыс туса Асăну хăми уçрĕç. Ку паттăрсем: Алексей Митрофанович Татаров (1964 – 1983 çç.) тата Николай Апполонович Перцев (1963 – 1984 çç.).

Шкул умĕнче Асăну хăми уçиччен интернационалист-салтаксем ачасемпе паттăрлăх урокĕсем ирттерчĕç.

– Ӳсе çитсе çын пултăмăр та асаттесен 1941–1945 çулсенчи паттăрлăхĕ умĕнче пите хĕретмерĕмĕр. Тăван çĕр-шыв хамăр ума лартнă задачăсене вĕçне çити пурнăçларăмăр, – терĕ актовăй зала пухăннисем умĕнче сăмах каланă чух Е. Андреев яч. хис. хуçалăха ертсе пыракан В. Семенов.

– Афганистанри çар операцийĕсене каясси пирки пирĕнтен нумайăшĕнчен ыйтса та тăман. Приказ панă – пурнăçламалла. Тăван çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе вара пирĕн юлташсен ĕмĕчĕсем вăхăтсăр татăлчĕç. Вĕсене чыс туса Асăну хăми уçни – пирĕн паянхи парăм, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕреннĕ 21 каччă вăхăт çитсен çар тивĕçне Афганистан Республикинче пурнăçланине палăртса Виталий Грачев.

Мăн Тутаркассинчи Алексей Татаровпа Мăн Шашкарти Николай Перцев пĕр кун, 1982 çулхи майăн 9-мĕшĕнче çара кайнă. «Вĕсем пĕрле сăн ӳкерттерсе ярса панă сăн ӳкерчĕк – çемье архивĕнчи чи паха хатĕр», – терĕ Асăну хăми уçнă çĕре хутшăнса Юлия Федоровна Татарова ывăлĕ çинчен ыррине çеç аса илсе. Шыв патне кайма çĕклем тытнине курсанах «Анне, ан кай, хамах кайса килетĕп» тесе наччасрах шыв ăсса килсе панине амăшĕ паян куççульпе аса илет.

– Ан çиллен, Алеша. Пăхса усраймарăм. Çитĕнтертĕм те усă кураймарăм, асăрхаймарăм,– куççульне шăлчĕ Асăну хăми çинчен кăмăллăн пăхакан ывăлĕн сăнĕ умĕнче Ю. Татарова.

Алеша хыççăн 9 уйăхран пуç хунă Николай Апполонович Перцев та сăн ӳкерчĕкрен ĕнер çеç вăтам шкул пĕтернĕн ăшă кăмăлпа пăхать. Куçĕсенче – çутă малашлăх...

Асăну хăми уçнă çĕре район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, вĕренӳпе çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи З. Дипломатова, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев хутшăнчĕç.

– Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе пуç хунă кашни çар çынни – пирĕншĕн чăн-чăн паттăр. Вĕсен тĕслĕхĕ çинче паянхи шкул ачисене патриотла воспитани парасси – пирĕн пĕрлехи ĕç, – терĕ Асăну хăми уçнă çĕрте Ростислав Николаевич.

Асăну хăми уçассине Афганистан вăрçин инваличĕсен районти обществăлла уйрăмĕ йĕркелерĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕ

# Асрах Афганистан

Тăван çĕр-шыва юратасси, унăн паттăрлăхне хисеплесси – ачаран пуçланакан пулăм. Паянхи интернационалист-салтаксем çамрăк ăрăва патриотизмла воспитани парассипе ырми-канми ĕçлеççĕ.

Çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе кӳршĕллĕ Афганистан Республикинчи вăрçăна вунă çул хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан кăларнăранпа нарăсăн 15-мĕшĕнче 25 çул çитет. Чĕрĕк ĕмĕр иртрĕ пулин те вăрçă суранĕсем халĕ те лăпланмаççĕ-ха. Çĕр-шыв тулашĕнчи вăрçăна хутшăннă 620 пин салтакпа офицершăн, вăрçă хирĕнче пуç хунă 15051 çар çыннин ашшĕ-амăшĕсемпе тăванĕсемшĕн, тĕрлĕ виçеллĕ суран илнĕ 53753 çар çыннишĕн çав хăрушă кунсем асран тухмаççĕ, тĕлĕкрен те татăлмаççĕ. Çамрăк ăрусен вара вĕсен паттăрлăхне нихăçан та манас марччĕ: вăл та пирĕн çĕр-шыв историйĕ-çке.

Пирĕн çарсене çав вăрçăран кăларнăранпа 25 çул çитнине халалласа районта тĕпчев ĕçĕсен, сочиненисемпе ӳкерчĕксен конкурсне ирттерчĕç. Ăна иртнĕ тунти кун пĕтĕмлетрĕç. Комисси членĕсем кашни ĕçе тĕплĕ тишкерсе хак панă хыççăн Çатракассинчи вăтам шкулти 7 класра вĕренекен И. Ивановпа Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта 10 класра вĕренекен М. Цветкова çĕнтернĕ тесе йышăнчĕç. Иккĕмĕш вырăна 3 ĕç тивĕç пулчĕç: Кашмашри В. Тихоновăпа (9 класс) Д. Зайцевăн (6 класс), Москакассинчи Е. Овчинникова, И. Шигалева, Д. Дмитриева тата Д. Иванов ушкăнĕн, Муркашри А. Рожковăпа А. Павлинован. Виççĕмĕш вырăнта 4 участник: Сыпайĕнчи А. Яковлева, Юнкăри Л. Никитинăпа Н. Тепеева, Шомикри Т. Бурмисовăпа А. Гурьева, Ильинкăри А. Иванова.

Аслăрах çулхисемпе пĕр шайрах кĕрешнĕ А. Кириллов Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта 3-мĕш класра вĕренет. Комисси членĕсем ăна «Чи çамрăк участник» тесе чысланă.

Конкурса тăратнă ĕçсем паттăрсен ячĕсем манăçмасса, çав паттăрлăх ăруран ăрăва куçасса çирĕплетеççĕ. Эпир пĕрле çакна тума пултаратпăр пулсан, çамрăк ăрăвăн чĕринче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

## Официально

### Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее – аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 20.12.2014 г. № 41 «О проведении открытого аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики» . Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, Моргаушский район, с.Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс 8 (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

Характеристика объектов купли-продажи:

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:180102:156, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Костеряки, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:180102, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 107 960 (сто семь тысяч девятьсот шестьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (21 592 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (5 398 руб. 00 коп.).

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:250201:121, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Дворики, для строительства и содержания магазина, площадью 90 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 59 278 (пятьдесят девять тысяч двести семьдесят восемь) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (11 855 руб. 60 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2 963 руб. 90 коп.).

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:160306:462, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, для индивидуального жилищного строительства, площадью 320 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 22 003 (двадцать две тысячи три) рубля.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (4 400 руб. 60 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1 100 руб. 15 коп.).

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:080101:284, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1618 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 34 755 (тридцать четыре тысячи семьсот пятьдесят пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (6 951 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1 737 руб. 75 коп.).

**Лот №5** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:190401:140, категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 1214 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 16 124 (шестнадцать тысяч сто двадцать четыре) рубля.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3 224 руб. 80 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (806 руб. 20 коп.).

**Лот №6** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:150201:154, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, с. Чемеево, ул. Молодежная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2416 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 110 170 (сто десять тысяч сто семьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (22 034 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (5 508 руб. 50 коп.).

Информация о проведении аукциона: перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете №312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112389501 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

4. Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

5. Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 05 февраля 2014 года по 06 марта 2014 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе. С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб.№312.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующее требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии 07 марта 2014 года в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Чувашской Республики.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка. Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 11 марта 2014 года по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1 – 10.00, Лот №2 – 10.20, Лот №3 – 10.40, Лот №4 – 11.00, Лот №5 – 11.20, Лот № 6 – 11.40.

### Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

**Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:000000:4784, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, общей площадью 31 150 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.**


**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.** 5-10. **Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 7-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92.** 8-23.

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин** 4-10. **Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата. Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00.**


## Прогноз погоды

| | среда 5 февраля | | | | четверг 6 февраля | | | | пятница 7 февраля | | | | суббота 8 февраля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | **-15** | **-14** | **-13** | **-15** | **-19** | **-16** | **-13** | **-16** | **-19** | **-16** | **-12** | **-10** | **-11** | **-9** | **-7** | **-7** |
| Давление мм | 749 | 751 | 752 | 753 | **754** | **754** | **754** | **754** | 753 | 751 | 750 | 749 | 748 | 748 | 748 | 748 |
| Влажность % | 84 | 84 | 66 | 72 | 83 | 83 | 73 | 71 | 81 | 76 | 75 | 74 | 88 | 85 | 77 | 79 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 3 | 2 | 2 | 1 | 3 | 5 | 5 | 4 | 5 | 6 | 5 | 3 | 4 | 6 |
| | С-В | С | С-В | Ю | Ю | Ю | Ю-В | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 08:38 | 17:35 | | | 08:36 | 17:37 | | | 08:34 | 17:39 | | | 08:32 | 17:41 | |
| Луна восход / заход | | 10:29 | 00:12 | | | 10:55 | 01:26 | | | 11:26 | 02:35 | | | 12:03 | 03:39 | |


**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83.** 7-10.

** *

**Требуется продавец-консультант с медицинским образованием в «Оптику Гранд», (с. Моргауши). З/п от 14000 руб., график работы 5/2, соц. пакет. Тел.: 8-937-395-87-29.** 2-4.


## Пĕлтерӳсем. Объявления


**ЮБИЛЕЙ КОНЦЕРТНЕ ВАСКĂР!**

**Февралĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Виктор ПЕТРОВ Муркашри Культура çуртне йыхравлать. Кунта сире «30 çул сцена çинче» юбилей концерт программи кĕтет. Сире чăваш эстрада çăлтăрĕсем, кулăшпа сатира театрĕ хавас кăмăл парнелĕç, «Кăлтăрмачшоу» та пулĕ. Юбилей программи 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 48-74-99; 8-902-249-02-62.**

**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
- **Представительство интересов в судах;**
- **Подготовка исков, договоров, жалоб;**
- **Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;**
- **Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);**
- **Услуги по оценке недвижимости;**
- **Взыскание по КАСКО, ОСАГО;**
- **Регистрация, ликвидация организаций, ИП;**
- **Бухгалтерский и кадровый учет.**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119**
**Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48**
**г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48**
**сайт: www.victoria-ooo.ru**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 4-10.

**ООО «Росметалл» предлагает профнастил оцинкованный и окрашенный, металлочерепицу и водосточную систему. Цены на профнастил от 140 руб пог. м., собственное производство. Доставка. Требуется менеджер по продаже со знанием программы 1С. Зарплата достойная. Тел.: 8(83541)66-3-84, 8(8352)37-22-32.** 1-3.

**Новогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75.** 10-10.

***

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96.** 8-10.

***

**Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68.** 2-3.

***

**Тюкланă утă сутатăп. Хорнуй ялĕ. Тел.: 8-927-847-20-55.**

***

**Продаю сено в рулонах. Тел.: 8-961-340-55-68.** 1-2.

***

**11 уйăхри хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-927-868-03-45.**

***

**В ООО «Сундырь-Хлеб» в с. Большой Сундырь СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ на постоянное место работы: ПЕКАРИ, можно без опыта работы, график 2/2; ОПЕРАТОР КОТЕЛЬНОЙ с опытом работы. Оформление по ТК РФ. Обращаться по тел.: 8-927-996-94-77, 69-1-69, 69-3-36.**

***

**Для работы в районной прокуратуре требуется водитель с опытом работы, оплата согласно штатному расписанию. Можно обращаться в прокуратуру по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6 или по тел.: 62-7-59.**

***


**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Руссановой Еленой Валериановной, квалификационный аттестат кадастрового инженера № 21-11-40, почтовый адрес: 428024, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Хевешская, д. 17, корп. 1, кв. 62, адрес электронной почты russanova_elena@mail.ru, контактный телефон 8(8352)57-06-51, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельного участка с кадастровым номером 21:17:170301:61, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушкий район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Заовражная, д. 12 и по уточнению местоположения границы и площади земельного участка с кадастровым номером 21:17:170301:112, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушкий район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Заовражная.

Заказчиком кадастровых работ является: Конузин Григорий Николаевич, почтовый адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сятракасы, ул. Заовражная, д. 12.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19 10 марта 2014 г. в 10-00 часов.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с 5 февраля 2014 г. по 20 февраля 2014 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: земельный участок с кадастровым номером 21:17:170301:62, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушкий район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Заовражная, д. 13 и земельные участки в кадастровом квартале 21:17:170301.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

***

### ФГУП «Почта России» информирует для сведения населения

***Я часто езжу на работу в другие регионы. Слышал, что железнодорожные билеты можно на почте купить…***

Действительно, в 18 отделениях почтовой связи Моргаушского почтамта (Моргауши, Ядрин, Ядрин-1, Москакасы, Калайкасы, Васькино, Оринино, Одаркино, В. Ачаки, Засурье, Б.Сундырь, (Моргауши), Стрелецкое, Персирланы, Юськасы, Юваново, Юнга, Ярославка) можно купить железнодорожные и авиабилеты по любому направлению. На почте оформляются электронные билеты, которые приобретают все большую популярность среди россиян. Они удобны и практичны. Путешественнику не требуется возить с собой бумажные проездные документы. Для того, чтобы занять свое место в вагоне или в салоне самолета, ему достаточно лишь предъявить паспорт. Однако не все могут самостоятельно приобретать онлайн-билеты через Интернет, не у всех есть банковские карты, да и проблемы с безналичными расчетами могут возникнуть совершенно неожиданно. Поэтому предложение «Почта России» является востребованным и актуальным. Клиенты ценят быстроту, удобство и надежность услуг Почты по продаже авиа- и ж/д билетов, а главное – возможность оплатить билет, поменять или сдать его рядом с домом в вышеперечисленных отделениях почтовой связи.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают глубокое соболезнование родным и близким в связи с кончиной бывшей буфетчицы «Закусочной»
**КОЛЬЦОВОЙ**
**Галисы Венедиктовны.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**
**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 2 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 04.02.2014 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 5074.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.